ПУЛТАРУЛĂХ

# «Чăваш юрри, санпа эп мухтанатăп...»

**Чăваш наци библиотекин «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕнче Чăваш халăх çыравçин Юхма Мишшин пултарулăхне халаллană литературăпа музыка каçĕ иртрĕ.**




Уява «Тарават» фольклор ушкăн илемлĕх ертўçи Клара Осокина тата Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн председателĕ Вера Архипова ертсе пычĕç. Вулавăша пухăннисем Юхма Мишшин пултарулăхĕпе тĕплĕн паллашма пултарчĕç. Пултарулăх каçне сумлă поэт-писательсем, композиторсем хутшăнчĕç.

Юхма Мишши – академик, тĕпчевçĕ, публицист, куçаруçă, пĕтĕм тĕнчипех паллă çыравçă. Вăл истори романĕсемпе пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕпчев ĕçĕсем çырнă хушăрах сăвă та хайлать. Михаил Николаевич сăввисемпе хывнă юрăсем халăхра анлă сарăлнă. Вĕсенчен чылайăшне халăхăн тесе йышăнаççĕ. Поэт сăввисемпе чăваш композиторĕсем сахал мар юрă кĕвĕленĕ: Герман Лебедев, Филипп Лукин, Анисим Асламас, Юрий Кудаков, Олимпиада Агакова, Анатолий Никитин, Андрей Токарев, Авраам Бурундуков, Николай Андреев, Марина Ильичева-Шуракăш, Юрий Жуков, Николай Эриванов, Галина Скворцова тата ыттисем.

Хăнасене Иван Христофоров, Любовь Афанасьева, Клара Осокина, Олег Самана, Вероника Пинеслу, Галина Скворцова, Роза Степанова, Вениамин Колпаков, Марина Ильичева-Шуракăш Юхма Мишши сăввисемпе кĕвĕленĕ юрăсемпе савăнтарчĕç. Пухăннисен умĕнче хăйсен ăсталăхне «Таравat» тата «Сăрнай» фольклор ушкăнĕсем кăтартрĕç. Анатолий Никитин кĕвĕленĕ, халăхра анлă сарăлнă «Урхамахсем тăраç тапăртатса» юрра пурте пĕрле шăрантарчĕç.

Чăваш наци вулавăшĕн ĕçченĕсем фойере «Юхма Мишши пултарулăх эткерĕ» кĕнеке куравне йĕркелерĕç. Çакăн пек пĕлтерĕшлĕ мероприятисене малашне те ирттерме сĕнчĕç пухăннисем. Тăван сăмах, юрă-кĕвĕ чуна мăнаçлăх варкăштарса кĕртрĕ. Литературăпа музыка каçĕ чăваш юрри-кĕввин, сăмахĕн уявĕ пулса тăчĕ.

Юлашкинчен Юхма Мишшин «Шурă акăш ишет Атăл урлă» кĕнекинче пичетленнĕ «Чăваш юрри» мăнаçлăн та уççăн янăрарĕ.

«... Чăваш юрри! Санпа эп мухтанатăп,
Ялан-ялан эс манăн чĕрере.
Тертре те хуйхăра чуна уçатăн,
Пиллетĕн çĕнтерў кĕрешўре».

**Вера АРХИПОВА.**

Автор сăнўкерчĕкĕ.